# Йĕрке хуралçи

## Районти шалти ĕçсен пайĕн кăларăмĕ

### Шкул пĕтерекен çамрăксем валли

# Тивĕçлĕ пĕлӳ те, ĕç те – сире валли

***Йывăрлăхран ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. Çак тĕрĕслĕхрен юлас мар тесен пурнăç çулĕ çине тухакан çамрăкăн тарăн пĕлӳллĕ, çирĕп вăй-халлă та тăнăç кĕлеткеллĕ пулмалла, чăнлăха тата саккуна пăхăнассине мала хумалла, обществăра пĕр хăв çеç мар, юнашар та çынсем пуррине асра тытмалла.***

***Паян эпĕ калас сăмахсем кăçал вуннĕрмĕш классенчен вĕренсе тухакансене пырса тивеймеççĕ, енчен те вĕсем урăх вĕренӳ çулĕ суйланă пулсан. Анчах манăн сăмахăм вара çамрăксене шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлеме, халăхăн саккунлă прависене хӳтĕлеме вĕрентессипирки. Ку енпе районти шалти ĕçсен пайĕ мĕнле ĕçлесе пырать-ха? Çак ыйтупа эпĕ Муркаш тăрăхĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн кадрсемпе ĕçлеме пулăшаканĕпе Людмила Васильевна КРОЛЬКОВАПА тĕл пулса калаçрăм.***

**– Районти шалти ĕçсен пайĕнче кадрсемпе ĕçлесси епле пулса пырать-ха? Мĕн пĕлмелле-ха паян хăйсен пурнăçне милици ĕçне халаллас текен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен?**

– Ыйтăвĕ лайăх, мĕншĕн тесен кун пирки хаçатра калаçманни чылай пулса кайрĕ. Сирĕн ыйтăвăр çине хуравласа çапла калатăп: чăн малтан çак системăра ĕçлеме кăмăл, чун хушни кирлĕ. Иккĕмĕш вырăнта шкулта илнĕ тарăн пĕлӳ тата çирĕп сывлăх. Шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлеме вара вакансисем тупăнсах тăраççĕ. Паян пирĕн патăмăрта 112 йĕрке хуралçи ĕçлет пулсан та эпир паян вăтам пĕлӳ илнĕ тата çарта пулнă çамрăксене милиционер пулса ĕçлеме, юридици пĕлĕвне илнĕ яшсемпе хĕрсене участковый тата следователь ĕçĕсене, тивĕçлĕ пĕлӳллисене инженер-электроника, экономика енчен пĕлӳ илнисене потребительсен рынокĕнче право йĕркине пăснипе кĕрешекен инспектор пулса ĕçлеме йышăнма хатĕр. Куратăр ĕнтĕ, таса кăмăллă та çирĕп сывлăхлă çамрăк валли инçе каймасăрах ĕç вырăнĕ пур: тивĕçлĕ пĕлӳ ил те ĕçле.

**– Шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлеме ăçта пĕлӳ илмелле-ха?**

– Ку ыйтупа тĕрлĕ çĕрте тивĕçлĕ пĕлӳ илме пулать. Анчах пирĕн патăмăра килес текенсем ытларах Шупашкарти вĕренӳ заведенийĕсенчех пĕлӳ илейреççĕ. Акă паян пирĕн патăмăрта ĕçлекенсенчен пĕр пайĕ куçăмсăр майпа Шупашкарти милици шкулĕнче, Мускаври гуманитарипе экономика институчĕн Шупашкарти филиалĕнче, Мускаври патшалăх уçă университечĕн Шупашкарти филиалĕнче, кооперации институтĕнче вĕренеççĕ. Кусемсĕр пуçне куçăмлă йĕркепе РФ ШĔМĕн Волгоградри академийĕнче, Саратоври юридици институтĕнче, ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче юриста вĕренекенсем пур. Каласа хăвармалла, паян пирĕн патăмăрта ĕçлекен офицерсем хушшинче Чăваш патшалăх университечĕн юридици факультетĕнчен вĕренсе тухнисем те, Правăпа управлени академийĕнче пĕлӳ илсе тухнисем те пур.

**– Хăвăр патăрта ĕçлекенсен ӳсĕмĕсем пирки мĕн калайратăр?**

– Алă усса ларман çыннăн ӳсĕм пулатех. Акă пирĕн патăмăрта ĕçлекенсем хушшинче юлашки çулсенче виççĕн ЧР Президенчĕн стипендине илме тивĕçрĕç. Вĕсенчен пĕри – Николай Евгеньевич Кудряшов. 2001 çулта пирĕн патăта ĕçлекен 40 сотрудник тĕрлĕ вăхăтсенче служба командировкинче Çурçĕр Кавказра пулчĕ. Вĕсенчен кашнийĕнех патшалăх наградисем (медальсем) пур. Çак тĕслĕхсем пирĕн патра ĕçлекенсем патшалăх умĕнчи ĕçе тӳрĕ чунпа пурнăçлани пирки калаççĕ.

**– Кăçалхи 11-мĕш классемшĕн каярах юлтăмăр пулсан, çитес çулхисем пирки те паянах шутламалла. Вĕсенчен кам та пулин хăйĕн пурнăçне милици ĕçĕпе çыхăнтарма пăхать пулсан, кирлĕ пĕлĕве ăçта илме пулать-ха?**

– Тĕрĕсех, умри утăма çиччĕ виççе тумасăр майĕ çук. Паянхи вуннăмĕшсем пирки эсир хускатнă ыйту та вырăнлă. Вĕсене маларах асăннă вĕренӳ заведенийĕсемсĕр пуçне çаксене сĕнме пултаратăп: РФ ШĔМĕн Чулхулари академийĕн Шупашкарти филиалĕ (кунта кĕме кăçал пире 6 вы-



мăра милиционер пулса ĕçлеме килнĕскер, хăйĕн тăрашулăхĕпе патрульпе пост службин командирне çитрĕ. Пирĕн ĕçтеш кăçал РФ ШĔМĕн Чулхулари академийĕн Шупашкарти филиалĕн юлашки курсĕнче пĕлӳ пухать. Куратăр пулĕ, малашлăха пăхакан çамрăксем валли пирĕн патăмăрта ĕçлеме те, вĕренме те пур условисем те пур. Маттурсем вара татах пур. Акă педагогика университечĕ хыççăн ĕçпе тивĕçтерекен центрта учетра тăнă Ярапайкасси хĕрĕ Оксана Юрьевна Воробьева **(сăн ӳкерчĕкре)** хăйне центртан патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн инспекцине вăхăтлăх ĕçлеме ярсан хăйĕн ĕçлеслĕхне туллин кăтартрĕ те эпир ăна хамăр пата ĕçе илтĕмĕр. Паян вăл ĕç производствин ушкăнĕн кĕçĕн инспекторĕ, малашлăха шанчăкпа пăхаканскер, паян кооперации институчĕн юридици факультетĕнче куçăмсăр майпа вĕренет.

Çавăн пекех пирĕн патăмăр-

рăн панăччĕ, халĕ унта кĕме документсем тăратнă ачасем юлашки медицина комиссийĕ тăраççĕ. Сăмах май, çакăнтан вĕренсе тухнисем пирĕн патăмăрта 26-ăн ĕçлеççĕ), РФ ШĔМĕн Мускаври экономика хăрушсăрлăх академийĕ (кăçал кунта вĕренме кайма кăмăл тунисемпе халĕ хатĕрленӳ ĕçĕсем пыраççĕ), РФ ШĔМĕн шалти çарсен (внутренние войска) Пермьри çар институчĕ (унта вĕренме кĕме шалти ĕçсен пайĕ урлă кăçал 3 çамрăк документсем тăратрĕ).

**– Людмила Васильевна, шалти ĕçсен пайĕ хăйне валли кадрсем хатĕрлессипе алă усса лармасть. Ку вара – лăпкă пурнăç малашлăхĕ. Сăмахăмăра вĕçленĕ май мĕн калама пултаратăр?**

– Паян пуçланă калаçупа çитес çул шкул пĕтерекен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем паянах пирĕн пата кĕрсе калаçма пултараççĕ. Кашнинех эпир хавас.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

### Районти лару-тăру

# Ĕçсене хăй еккипе ямастпăр

Апрель уйăхĕ хыçа юлнă май ăна пĕтĕмлетме те вăхăт. Çак уйăхра граждансене преступниксенчен хӳтĕлессипе Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕ мероприятисен комплексне пурнăçларĕ. Анчах профилактика ĕçĕсене пула уйрăмах йывăр преступленисен хисепне сахаллатма май килмерĕ (пĕлтĕр 2 пулнă, кăçал – 5), хваттерсем çаратасси 2-рен 6-ăна çитрĕ, обществăлла вырăнта преступлени тăвасси 6-ран 12-не ӳсрĕ, çын çине алă çĕкленисем – 18-тан 30-ра. Çав вăхăтрах преступленисене уçса парасси ытларах ӳсрĕ: уйрăмах йывăр преступленисене уçса парасси 100 процент шайĕнчех юлчĕ, йывăр преступленисене уçса парасси 78,3 процентран 83,3 процента çитрĕ, вăтам йывăрăшшисене уçса парасси 51,2 процентран 11 процент ӳсрĕ. Çав вăхăтрах пысăк мар йывăрлăхлисене уçса парасси 87,4 процентран 4 процент чакрĕ.

Апрель уйăхĕнче ĕçлемен граждансем 91 преступлени (2007 çулта –109) турĕç, ушкăнпа тунă преступленисем 31-рен 13-не чакрĕç, ӳсĕр граждансем тунă преступлени 33-рен 36-на çитрĕ, унччен преступлени тунисем пĕлтĕрхи апрельте 43 преступлени тунă пулсан, кăçал кун пек тĕслĕхсем 35 пулчĕç.

**В. ЯКОВЛЕВ,**
**шалти ĕçсен пайĕн штаб начальникĕ.**



***Районти шалти ĕçсен пайĕ хăйсем патĕнче нумай çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене тата служба тивĕçне пурнăçланă чух пуç хунисене, вĕсен мăшăрĕсемпе тăванĕсене яланах хисеп тума вăхăт тупать. Нумаях пулмасть вĕсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнă ĕçтешĕсемпе вĕсен мăшăрĕсене Çĕнтерӳ кунĕпе саламларĕç.***

***Сăн ӳкерчĕкре: районти шалти ĕçсен пайĕнче службăра тăракансем Майăн 9-мĕшĕнчи шăплăх минутĕнче.***

### Республика кунĕ умĕн

# Яваплăха кашнин ӳстермелле

***2008 çул Муркаш Еншĕн пысăк уявпа палăрса юлĕ: районта тепĕр уйăхран ЧР Президенчĕн йышăнăвĕпе Чăваш Республикин кунĕ иртмелле. Çак йышăнăва район çыннисем хапăл тусах йышăнчĕç те куллен тăван тавралăха тирпей-илем кӳрессипе ĕçлеме пуçларĕç. Район центрĕ те, республика кунне хутшăнакан делегацисем иртекен ялсем те кунсерен мар, сехетсерен улшăнса, хитреленсе, тирпейленсе пыраççĕ. Апла пулин те вырăнсенче çитменлĕхсемсĕр те мар. Çакна шута илсех ĕнтĕ, апрелĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 15-мĕшĕччен, республикăрипе пĕрлех районта та шалти ĕçсен пайĕн, вырăнти самоуправлени органĕсен, РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин пирĕн республикăри Тĕп Управленийĕн вăйĕсемпе «Тасалăх» операци иртрĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе кĕскен паллаштарма районти шалти ĕçсен пайĕн милицин участоксенчи уполномоченнăйĕсен пуçлăхне Василий Иванович МИХАЙЛОВА чĕнтĕмĕр.***

Тасалăхпа тирпейлĕх ыйтăвĕ никама та айккинче тăратса хăвармалла мар. Хамăр кил-çурт тирпейлĕхĕшĕн хамăрах ответлă пулса тăратпăр мар-им-ха? Çавăнпа та республикăра «Тасалăх» операцие иртерме йышăннине никам та хирĕçлес çук. Унăн тĕп тĕллевĕ – ялсене, урамсене, юхан шывсене тата вĕсен çыранĕсене, вăрмансемпе парксене тасалăх енчен епле шайра тытса тăнине тĕрĕслесси, ку енĕпе граждансемпе должноçри çынсем, предприятисемпе организацисем çут çанталăк сыхлавĕн законодательствине мĕнле пурнăçланине пăхса тăрасси, экологи тĕлĕшĕнчен правăна пăснăшăн явап тыттарасси тата кунашкал тĕслĕхсене пĕтерессси.

Çак тапхăрта эпир хамăр енчен операцире палăртнă ĕçсене 12 юхан шыв, 10 вăрман, 19 промышленноç предприятийĕ, 11 ял хуçалăх производство кооперативĕ тĕлĕшпе туса ирттертĕмĕр. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе 37 çынна Чăваш Республикинче 2003 çулта кăларнă «Чăваш Республикинче административлă майпа правăна пăсни çинчен» саккун статйисемпе айăпларăмăр. Вĕсенчен асăннă саккунăн 10-мĕш статйипе (хуласемпе ялсене тирпей-илем кĕртес правилăсене пăсни пирки) – 23 çын, 11-мĕш статйипе (транспорт хатĕрĕсемпе усă курса тата вĕсене юсаса ялсен территорийĕсене варалани) – 6 çын, 15-мĕш статйипе (йытăсене тытас правилăсене пăхăнманшăн) – 8 çын тĕлĕшпе административлă протоколсем çыртăмăр.

Ялсенчи тирпейлĕх пирки калаçнă чух Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте урамри хăй тĕллĕн çĕкленнĕ сарайсем пирки те каламалла. Вĕсем чылай чух пушар хăрушсăрлăх нормисене тивĕçтермеççĕ, мĕншĕн тесен çывăхрах утăулăм, ытти хăвăрт тивсе илме пултаракан хатĕрсем купаланса тăраççĕ. Кунта çакна калас килет: ял урамĕпе кил-çурт умĕ уйрăм çын харпăрлăхĕ мар. Вăл обществăлла вырăн шутланать. Вутă-шанкăпа строительство материалĕсене унта купаласа лартма-упрама юрамасть. Кил умĕсене пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе шыв тултарнă пичке вырнаçтарма, хăйăр купаласа хума кăна ирĕк параççĕ. Халĕ каланă ыйту кăçал районта республика кунне ирттерме хатĕрленнĕ май куç умне вăйлă тухрĕ. Иртнĕ çул çак йĕркесĕрлĕхшĕн РФ «Административлă правăна пăсни çинчен» Кодексĕн 7.1 статйипе райцентрти 12 çынна айăпланăччĕ пулсан, кăçал ку статьяпа 27 çынна асăрхаттартăмăр, 3 гражданина айăпларăмăр та.

Сăмахăма вĕçлесе çапла калатăп, тавралăх тирпейлĕхĕ вăхăтлăх ĕç пулса тăмасть. Вăл такамшăн мар, хамăр валлиех. Айтăр-ха хисеплеме вĕренер хамăра.

### Экономика преступленийĕсем

# Нацпроектсем. Епле «усă» кӳреççĕ вĕсем?

***Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указĕпе икĕ çул çурă каялла пирĕн çĕршывра «Раççей гражданĕсене – пурăнмалли çурт-йĕр», «АПК аталанăвĕ», «Вĕрентӳ», «Сывлăх» наци проекчĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Çĕршыв вĕсене пурнăçа кĕртме пысăк укçа уйăрать. Вĕсемпе пурте тĕллевлĕ усă куратпăр-иха? Çак ыйтусем çине хурав шырасси, кунти коррупци аталанăвне ура хурасси пирĕн ĕçĕн пĕр енĕ пулса тăрать.***

**ВĔРЕНТӲ**

Çак наци проектне пурнăçа кĕртесси районта епле пынипе пирĕн подразделени пĕтĕмпе 82 шкула тĕрĕслерĕ. Таса шыв çине тухнă тĕслĕхсем пулмарĕç мар. Акă «Çурлатринчи «Лебедушка» шкул-сад» муниципаллă вĕрентӳ учреждениине тĕрĕсленĕ чух нимĕнпе никĕсленмен сăлтавсене пула кунта ĕçлекенсене вĕсем çулталăкри черетлĕ отпускра чух районти вĕрентӳ пайĕн бухгалтерине суя документсемпе ĕç укçи кĕртсе пани куç умне пулчĕ. Кунта Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 292-мĕш статйипе иртнĕ çулхи февральтех В. Андреева директор тĕлĕшпе 5 преступление учета тăратрăмăр.

Çавăн пекех Çатракассинчи вăтам шкулта çук çын тĕлĕшпе суя табель çырса ĕç укçи «тӳлени» çиеле тухрĕ. Ку шкулта кăçалхи январьте РФ Уголовнăй Кодексĕн 292-мĕш статйипе 6 преступление шута илтĕмĕр.

**СЫВЛĂХ**

«Сывлăх» приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртесси РФ Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствипе ЧР Министрсен Кабинечĕ тунă Килĕшӳ çинче йĕркеленсе пырать. Çак проекта реализацилеме района çакăншăн укçатенкĕ уйăрса панă:

– чирлисене сывалма Республика тулашне яма;

– патшалăх тата муниципаллă учрежденисенче ĕçлекен граждансемпе хушма диспансеризаци ирттерме;

– халăха вакцинăлама;

–диагностика оборудованине вырнаçтарма;

–сывату заведенийĕсене ача çуратнин сертификачĕсемпе тӳлеме;

– «Аслă ăру» программа.

Районта «Сывлăх» приоритетлă наци проекчĕ саккунсене пăсмасăр пурнăçа кĕрсе пыни савăнтарать.

**АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСНЕ АТАЛАНТАРАССИ**

Ку утăм ял хуçалăхĕшĕн чылайранпа кĕтнĕ пулăм. Анчах мĕн панипе кунта та тĕллевлĕ усă курмасан айăплисен суд тенкелĕ çине ларасси те инçе мар. Тĕслĕхрен, ООО «Лидер» агрофирма» ертӳçи Э. Мочалов 2006 çулхи май уйăхĕнче «Россельхозбанкăн» Шупашкарти филиалĕнчен пĕр çуллăх 2,6 миллион тенкĕ укçа процент ставкисене çăмăллатнă майпа субсидилес йĕркепе илнĕ. Хыççăн ЧР Ял хуçалăх министерствине суя документсем тăратса 91 пин тенкĕ субсиди илнĕ те кредита тӳлевсемпе татăлма янă.

**И. ИЛЛАРИОНОВ,**
**ЧР ШĔМĕн экономикăлла преступленисемпе кĕрешессипе районти оперативлă шырав чаçĕн пуçлăхĕ.**

### Тупма пулăшăр

# Шырав пырать



15 çул каялла 1993 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче Ваçкасси ял тăрăхĕнчи Купăрля ялĕнче çуралса ӳснĕ 25 çулхи яш Александр Иванович Федоров Ваçкасси ялĕн Культура çуртĕнче хĕре мăшкăллама тăнă чух та хăй право йĕркине пăсни пирки иккĕленмен ĕнтĕ. Кун пирки шалти ĕçсен пайĕ преступлени пулса иртни палăрсанах уголовнăй ĕç пуçарчĕ. А. Федоров вара, хăйне тивĕçлипе ответ тыттарĕç тесе хăраса-ши, ялтан, тăванĕсем патĕнчен паллă мар енне тухса тарчĕ. Ун хыççăн ун пирки шырав пуçартăмăр. Çур çул ытларах иртсен вăл Свердловск облаçĕнчи Камышевск районĕнче тепĕр преступлени тунипе сас пачĕ. Анчах унтан та вăл паллă мар еннелле тухса кайса çухалнă. Çапла вара 1994 çултанпа Александр Иванович Федоров – федераллă шыравра. Ун пирки пĕлекенсене районти шалти ĕçсен пайне пĕлтерме ыйтатпăр. Вăрттăнлăха гарантилетпĕр.

**М. МЯСНИКОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн уголовнăй шыравĕн аслă оперуполномоченнăйĕ.**